Ăс-хакăл вăйăи « Чăваш ен» .

(Вырăс шкулесенчи 7-8 классенче вĕренекенсемпе ирттерме пулать).

Кирлĕ хатĕрсем: проектор, компьютер, экран,презентаци.

Сапăрлăх тĕллевĕсем: туслăха çирĕплетесси, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕренесси.

Пĕлӳ тĕллевĕсем: Чăваш Республики çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси.

Аталантару тĕллевĕсем: ачасен тимлĕхне, тавракурăмне, шухăшлавне ӳстересси, каласу чĕлхине аталантарасси.

Ас-хакăл вăйăин йĕрки:

1.Ертсе пыракан сăмахĕ.

2.Командăсемпе паллашни.

3. Вăйă йĕркипе паллаштарни.

4. Пĕтĕмлетӳ.

Чăваш ен, Чăваш ен,
Çăлăру ялкăшать тӳпере.
Чăваш ен, Чăваш ен,
Сан яту яланах чĕрере.
(В.Давыдов-Анатри)

I. Ертсе пыракан сăмахĕ.

Эпир паян сирĕнпе ăс-хакăл вăйăи ирттеретпĕр. Пирĕн умра икĕ команда: «Хĕвел» тата «Уйăх». Халĕ вĕсем хăйсемпе паллаштараççĕ.

II.Командăсемпе паллашни (капитансем паллаштараççĕ).

III. Вăйă йĕркипе паллаштарни.

Ертсе пыракан: вăйăра икĕ команда терĕмĕр.Вĕсем схема тăрăх хăйсене валли ыйтусен темине суйласа илеççĕ.Кашни ыйтун хăйĕн хакĕ пур.Тĕрĕс хуравшăн балл хутшăнать. Камăн балл нумайрах пулать, çав çĕнтерет.

Экран çине таблица тухать. Унта ыйтусем тата вĕсен хакĕсем.

Пĕрремĕш категори- «Тĕрлĕ енлĕ ыйтусем».

10 балл- Чăваш Республикинче миçе патшалăх чĕлхи?

20 балл- Чăваш Республикин гербĕ çинче мĕнле ӳсен-тăран пур?

30 балл- Чăваш Республикин кунне хăçан паллă тăваççĕ?

40 балл-Чăваш Республикинче миçе хула? Вĕсен ячĕсем.

50 балл- Чăваш Республикин территорийĕнче мĕнле юхан шывсем пур?

Иккĕмĕш категории- «Паллă ентешсем».

10 балл- «Нарспи» поэмăн авторĕ кам?

20 балл- Чăваш Республикин виçĕ космонавт. Вĕсем камсем?

30 балл- Ҫеçпĕл Мишшин чăн хушамачĕ, ашшĕ ячĕ мĕнле?

40 балл- Чăваш театрне кам тата хăçан пуçарса янă?

50 балл- Чăваш Республикин гимне камсем çырнă?

Виççĕмĕш категории- «Ĕненетĕп-ĕненместĕп».

10 балл- Чăваш алфавитĕнче 36 сас палли. (Ҫук).

20 балл- Иван Яковлевич Яковлев –чăвашсене çутта кăлараканĕ.(Ҫапла).

30 балл- Чăваш Республикин пĕрремĕш президенчĕ Святослав Федоров. (Ҫук).

40 балл- Надежда Павлова –тĕнчипе паллă балерина.(Ҫапла).

50 балл- Никита Бичурин Индире нумай çул пурăннă. (Ҫук).

Тăваттăмĕш категории- «Тупмалли юмахсем».

10 балл- Пĕр çăмхана пин йĕп чикнĕ.(Чĕрĕп).

20 балл- Кам сухаллă çуралать?(Качака).

30 балл- Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă.(Мăйăр).

40 балл- Ани шурă, вăрлăхĕ хура.(Кĕнеке).

50 балл- Юнĕ пур та чунĕ çук.(Палан).

Пиллĕкмĕш категории- «Ваттисен сăмахĕсем» (тĕрĕс вĕçлемелле).

10 балл- Ватă çын- … (тăватă çын).

20 балл- Вĕренни -çутă, вĕренменни- … (тĕттĕм).

30 балл- Кам нумай вулать, çав … (нумай пĕлет).

40 балл- Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр … (вĕрен).

50 балл- Вăрман çур … (тăлăп).

IV. Пĕтĕмлетӳ.

Вăйă вĕçленсен баллсене шутлаççĕ, çĕнтерӳçĕсене саламлаççĕ.